28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ИЮЛЬ
31
ЫТЛАРИКУН
146(6897) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

ХИСЕП ХĂМИ

Ĕççынни депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ăнăçлă тултарнăшăн тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстернĕшĕн малта пыракан çак колхозсемпе колхозниксене республикăри ХИСЕП ХĂМИ çине кĕртнĕ:

ШУПАШКАР РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

97. Соляновски ял Советĕнчи «Правда» колхоз (председателĕ Игнатьев юлташ, ферма заведующийĕ Шаронов юлташ).
98. «Малалла» колхоз (председателĕ Григорьева юлташ, ферма заведующийĕ Платонова юлташ).
99. Сталин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Ипатов юлташ, ферма заведующийĕ Никифоров юлташ).
100. «Челюскинец» колхоз (председателĕ Федоров юлташ, ферма заведующийĕ Яковлев юлташ).
101. «Рыкша» колхоз (председателĕ Филиппов юлташ, ферма заведующийĕ Филаретова юлташ).
102. «Чăваш Коммуни» колхоз (председателĕ Игнатьев юлташ, ферма заведующийĕ Иванова юлташ).
103. «Кормилец» колхоз (председателĕ Артемьев юлташ, ферма заведующийĕ Павлов юлташ).
104. Жданов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Иванов юлташ, ферма заведующийĕ Никоноров юлташ).
105. «Правда» колхоз (председателĕ Виноградов юлташ, ферма заведующийĕ Яковлева юлташ).

ПЕРВОМАЙСКИ РАЙОН ТĂРĂХ:

106. «Восход» колхоз (председателĕ Волков юлташ, ферма заведующийĕ Груздева юлташ).
107. «Красное Именево» колхоз (председателĕ Кузьмина юлташ, ферма заведующийĕ Кошкин юлташ).
108. «Липовка» колхоз (председателĕ Макаров юлташ, ферма заведующийĕ Максимова юлташ).

ВĂРМАР РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

109. «Дружба» колхоз (председателĕ Григорьев юлташ, ферма заведующийĕ Тимофеев юлташ).
110. «Большевик» колхоз (председателĕ Алексеев юлташ, ферма заведующийĕ Лукин юлташ).
111. «Красная Кубня» колхоз (председателĕ Сапаркин юлташ, ферма заведующийĕ Степанов юлташ).
112. Калинин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Николаев юлташ, ферма заведующийĕ Денисов юлташ).
113. «Заря» колхоз (председателĕ Иевлев юлташ, ферма заведующийĕ Степанов юлташ).
114. «Свобода» колхоз (председателĕ Иванов юлташ).
115. «Красные Мураты» колхоз (председателĕ Данилов юлташ).
116. «Смычка» колхоз (председателĕ Александров юлташ, ферма заведующийĕ Шнуров юлташ).
117. Молотов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Ефимов юлташ).
118. «Красные Шептахи» колхоз (председателĕ Васильев юлташ, ферма заведующийĕ Степанов юлташ).
119. «Красные Шигали» колхоз (председателĕ Чернов юлташ, ферма заведующийĕ Павлов юлташ).
120. «Октябрь» колхоз (председателĕ Иванов юлташ).

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР-ĕнчи колхозниксемпе колхозницăсене, ялхуçалăх, промышленность, культура тата искусство работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 135, 138, 139, 141, 142 тата 145-мĕш номерĕнче.

ШУПАШКАР РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

1. Клавдия Александровна Александрова—Госсортфондăн районри вăрлăх ин заведующине.
2. Екатерина Артемьевна Артемьевăна—районри библиотека заведующине.
3. Никита Ксенофонтович Бычкова—икас ял Совет исполкомĕн председательне.
4. Фадей Прохорович Виноградова—«Победа» колхозри комсомол организацин секретарьне.
5. Антон Леонтьевич Леонтьева—«Араслан» промартельри чăпта çапакана.
6. Транквиллин Логинович Логинова—ВКП(б) райкомĕн иккĕмĕш секретарьне.
7. Алексей Иванович Маметкина—Ик…ссинчи сыхăну отделенин почтальонне.
8. Виктор Несторович Нестерова—«Араслан» промартель правленийĕн председательне.
9. Федор Никитич Никитина—Молотов ячĕпе тăракан колхоз бригадирне.
10. Евдокия Петровна Петровăна—Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председательне.
11. Екатерина Петровна Петровăна—…акăрти вулав сурчĕн заведующине.
12. Иван Степанович Степанова—«Чăваш Коммуни» колхозри колхозника.

ШУПАШКАР ХУЛИ ТĂРĂХ:

1. Леонид Яковлевич Аганова—писателе.
2. Мария Степановна Агачевăна—хулари промкомбинатăн йăвалакан цехри …ам çăвакана.
3. Татьяна Григорьевна Алюшинăна—Чăвашсен государство издательствинчи аслă машинисткăна.
4. Наум Андреевич Андреева—Чăвашсен чĕлхе, литературăпа истори тĕлĕшĕпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев институчĕн наччăй сотрудникне.
5. Анна Исаковна Андриановăна—«Кожупряжь» артельри рабочие.
6. Зоя Арсентьевна Арсентьевăна—заводри шлиповщипăна.
7. Зинаида Архиповна Архиповăна—цехри штамповщипăна.
8. Нина Акимовна Багровăна—ВКП(б) …комĕн машинисткине.
9. Виктор Константинович Баракова—Госбанкăн Чăваш АССР-ĕнчи кантурĕн главнăй бухгалтерĕн заместительне.
10. Екатерина Петровна Башаевăна—Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи ветеринарипе бактериологи лабораторийĕн директорне.
11. Александр Егорович Бачкова (Алгана)—поэта.
12. Василий Петрович Белова—заводри строгальщика.
13. Евгения Васильевна Белоусовăна—ВКП(б) Обкомĕн организацинпе инструкторсен пайĕн инструкторне.
14. Зинаида Александровна Благоразумовăна — 1-мĕш типографинчи наборщицăна.
15. Александр Николаевич Богданова—Госбанкăн Чăваш АССР-чи кантурĕн инкассаци пайĕн начальникне.
16. Мария Антоновна Большовăна — 3056-мĕш номерлĕ эвакогоспитальри старши медицина сестрине.
17. Раиса Константиновна Борисовăна—3-мĕш ача сачĕн заведующине.
18. Александр Васильевич Буйволова—заводри производство начальникĕн заместительне.
19. Василий Семенович Бурнунова — заводри слесаре.
20. Александр Трифонович Быкова — Чăвашсен Государство издательствинчи выпускающи редактора.
21. Антонина Даниловна Васильевăна — 3058-мĕш номерлĕ эвакогоспитальри шăл врачне.
22. Лаврентий Васильевич Васильева—714-мĕш çулйĕр эксплоатаци участокĕнчи çул хывакана.
23. Николай Дмитриевич Васильева—Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн главнăй ветеринари врачне.
24. Иван Алексеевич Веденеева — Госбанкăн хулари управленийĕн старши бухгалтерне.
25. Геннадий Викторович Викторова—Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи ĕç вăйне шута илес тата валеçес тĕлĕшпе ĕçлекен бюрори старши инспектора.
26. Иван Григорьевич Виноградова — хулари çар комиссариачĕн 4-мĕш пай начальникне.
27. Зоя Егоровна Волковăна — Атăл леш енчи торфопредприятинчи бригадира.
28. Николай Григорьевич Волкова (Кашкăр Микулине) — халăх юмахçине.
29. Анфиса Тимофеевна Воронцовăна—ВКП(б) Обкомĕн кадрсен пайĕн инструкторне.

Малалли пулать.

Тырпула вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме хатĕр пулар!

Вăрнарсем чĕнсе калашине ырлаççĕ

Ишлей районĕнчи Сыбайкасси ял Советĕнче колхоз активĕн канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура ял Совет председателĕ В. Смелов юлташ СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленин тата вăрнарсем чĕнсе калани çинчен доклад туса пачĕ. Канашлăва пухăннă колхозниксем вăрнарсем чĕнсе каланине кăмăлласа ăмăртăва хутшăнма йышăнчĕç. Канашлура пулнă активистсем хăйсен колхозĕсенче партипе правительствăн çак пахă постановленийĕ çинчен тата вăрнарсем чĕнсе калани çинчен колхозниксене ăнлантарса пачĕç. Камин колхозрах пухусем пулса иртрĕç.

Сыбайкасси ял Советĕнчи колхозсем тырпул пухса кĕме хатĕрленсе çитнĕ.

«Вускассы» колхоз (председателĕ Волков юлташ) тырпул пухса кĕме лайăх хатĕрленет. Колхоз ĕç планĕ тунă. Витнĕ итеме тасатса хатĕрленĕ. 8 амбара формалин шывĕпе çуса тасатнă. Çурласем шăллатса хунă. Колхоз пурĕ 35 кĕрепеллĕ çава хатĕрленĕ, сулакансене уйăрса хунă. Урапасем, шăналăк-михĕсем çителĕклĕ. «Вускассы» колхоз кĕрхи тырăсене 6 кунта, çуртырписене 10 кунта вырса пĕтерме йышăнчĕ тата тырă вырма тухсан 5-мĕш кунне авăн çапма, государствăна тырă пама тытăнма палăртнă. Государствăна тырă леçме ятарласа бригада тунă, вăл бригадăна чи лайăх колхозница З. Лапцова юлташ ертсе пырать.

Колхозниксем йышăннă тăрăх, сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татмалла, августăн 25-мĕшĕ тĕлне ыраш акса пĕтермелле. Тырă вырнă вăхăтра колхозра столовăй пулать.

«Вускассы» колхоз утă çулса тата капана хывса та пĕтерчĕ, 30 тонна силос хыврĕ, 13 лав армути, 10 лав çăка çаппи хатĕрлесе хучĕ.

Тырпула вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртĕпĕр. Сĕнтерÿ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çĕрĕн-кунĕн ĕçлĕпĕр.

Е. ОСЬКИНА,
«Вускассы» колхоз счетоводĕ.

100 лаша ытла çитĕнтернĕ конюх

Сĕнтĕр районĕнчи «Родина» колхоз членĕ Перасковья Герасимова 1931 çултанпа колхоз лашисене пăхнă çĕрте ĕçлет. 14 çул хушшинче вăл колхоза 100 лаша ытла çитĕнтерсе панă. Юлашки икĕ çул хушшинче кăна Герасимова юлташ 10 тиха пăхса çитĕнтернĕ.

Перасковья Герасимова—ватă колхозница, кăçал 71 çул тултарать. Апла пулин те, вăл ĕçрен уйăрălма шутламасть. Вăл лашасене пăхнисĕр пуçне, ытти ĕçсене те хутшăнать. Çапла иртнĕ çулта вăл 600 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă. Кăçал та çур çул хушшинче 200 ĕçкунĕ ытла тунă.

— Манăн 5 ывăл çак аслă вăрçăра нимĕçсене хирĕç çапăçрĕç. Вĕсенчен пĕри Тăван çĕршывшăн пуçне хучĕ. Çав йывăр кунсенче эпĕ алла усса лармарăм. Тăшмана часрах çапса аркатас тесе, ватă пуçăмпах ырми-канми ĕçлерĕм. Манăн ĕç сая каймарĕ, чаплă çĕнтерÿ кунне кĕтсе илтĕмĕр,—тет халь Герасимова юлташ.

А. СОЛОВЬЕВ.

Ĕçри çитменлĕхсене пĕтермелле

Йĕпреç МТС-ĕ хăйĕн çулталăкри планне 86 процент тултарнă. 10-мĕш бригада (бригадирĕ Иванов юлташ) çулталăкри плана 97 процент, 11-мĕш бригада (бригадирĕ Макаров юлташ) 94 процент тултарнă. Уйрăм трактористсем, сăмахран, И. Козловпа М. Козлова, В. Чаквин, П. Асанов юлташсем çулталăкри плана ытлашшипех тултарнă.

МТС-ăн хăйĕн çулталăкри планне тахçанах тултарма май пулнă. Анчах та кунта трактористсемпе комбайнерсене механиксем пулăшса пымаççĕ.

МТС-ра механиксем яланах шофер вырăнĕнче ĕçлеççĕ, çавна май трактор бригадисенче те пулаймаççĕ. 5-мĕш трактор бригадинче пĕр трактора 2 эрне ытла юсанă.

МТС-ра социализмлă ăмăртура юсас ĕçсенче хăш тракторист е комбайнер мĕнле ĕçленине шута илсе пымаççĕ. Агитаци ĕçне те начар туса пыраççĕ. Саратов облаçĕнчи Надеждинск МТС коллективĕ чĕнсе каланине те тĕплĕн сÿтсе-явман, трактористсемпе комбайнерсене ăмăртăва явăçтарас тĕлĕшпе те нимĕн те туман.

П. КУРАКОВ.

Обязательствăсем илеççĕ

КŸКЕÇ. (Телефонпа). Кунта ял Советпа колхоз председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Çак канашлура колхозри активистсем те пулчĕç. Канашлура СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление тата Вăрнар районĕнчи ялхуçалăх работникĕсем республикăри мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе хатĕрлев организацийĕсен работникĕсене чĕнсе каланине сÿтсе-яврĕç.

Канашлура пулнисем конкретнăй обязательствăсем илчĕç. Августăн 1-мĕшĕ тĕлне государствăна утă парса татма, кĕрхи тырăсене 6 кунта, çурхи тырăсене 12 кунта вырса пухма, октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне тĕштырра тата ялхуçалăхĕн ытти продукчĕсене государствăна парса татма йышăнчĕç.

Августăн 25-мĕшĕ тĕлне ыраш акса пĕтерме, октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне кĕрхи сĕртме туса пĕтерме пулчĕç.

Халĕ кашни колхозрах колхозниксен пухăвĕсем пулса иртеççĕ. Çак пухусенче колхоз председателĕсем илнĕ обязательствăсене ырлаççĕ, тырпул пухса кĕртес ĕçре социализмлă ăмăртăва хутшăнса ĕçлеме пулаççĕ.

Г. ПЕТРОВ.

1029 гектар вырса пухмалла

Шăхасан районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозăн вырса пухмалли кĕрхи тырăсем 375 гектар, çурхи тырăсем 645 гектар шутланаççĕ. Колхоз çак тырпула 12 кун хушшинче вырса пухма план тунă. Тырпул пухса кĕртес ĕçе пурĕ кунта 412 колхозник хутшăнмалла. Кашни колхозник ăçта ĕçлемеллине лайăх пĕлет. Тырпула пухса кĕртес ĕçе колхозра пĕтĕмпех уйрăмăн тата пĕчĕк ушкăнпа тума пăхнă. Уйри ĕçе вăхăтра тата кал-каллăн иртерес тесе, тырă вырма тухнă малтанхи кунранах столовăй ĕçлеме тытăнать. Çавăн пекех 250 ача валли ясли пулать. Столовăйра тата яслинче ĕçлеме çак ĕçсене лайăх пĕлекен колхозницăсене уйăрнă.

Тырпул пухмалли машинăсемпе транспорт инвентарĕсене лайăх юсаса хатĕрленĕ. Колхоз тимĕрçи Чернов юлташ мухтава тивĕçлĕ ĕçлет. Вăл машинăсене юсанисĕр пуçне 150 çава туптанă, 420 çурла шăлланă. Тырă вырма тухнă хыççăн 5 кунтан авăн çапма тата государствăна тырă пама тытăнаççĕ. Колхозра ятарласа транспорт бригади тунă унта ĕçлеме чи шанчăклă тата ĕçчен колхозниксене уйăрнă. Транспорт бригадине валли 200 михĕ хатĕрленĕ. Урапа сĕрме тикĕт, тырă лавĕсене сыхма вĕрен-пăявсем тата ытти кирлĕ япаласем те çителĕклĕ.

Тырпул пухса кĕнĕ вăхăтра кашни бригадăрах стена хаçачĕ тухать.

Колхозниксемпе колхозницăсен пухăвĕнче вăрнарсем чĕнсе каланине сÿтсе-явса хăйсем çине конкретнăй обязательствăсем илнĕ. Вăл обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçласшăн кашни колхозникпа колхозница ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

П. КОЗЛОВ.

Пур енчен те хатĕр

Ишлей районĕнчи «Коммунист» колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене пурне те вăхăтра та пысăк пахалăхлăн туса пырать. Çуракине ăнăçлă вĕçленĕ хыççăн колхоз çийĕнчех тырпул пухса кĕртме хатĕрленме тытăнчĕ. 2 жнейка тата 2 молотилка юсанă. Çурласемпе кĕрепеллĕ çавасем çителĕклĕ хатĕрленĕ. Висĕ витнĕ итеме юсанă, тасатса хунă. 2 авăн тăваççĕ, авăн тума кирлĕ чулсемпе йывăççене хатĕрленĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче сÿтсе-явнă хыççăн тырпул пухса кĕмелли ĕç планне тунă. Çав план тăрăх уйхирти пĕтĕм ĕçе уйрăм сдельщинăпа тата пĕчĕк ушкăнсемпе туса пыма пăхнă. Колхозра пурĕ 7 звено ĕçлемелле. Кĕрхи тырăсене 9 ĕç кунĕнче, çурхи тырăсене 10 ĕç кунĕнче вырса тата çапса пуçтармалла. Тырă вырма тытăннă хыççăн виççĕмĕш кунĕнче колхозниксен пĕр ушкăнĕ авăн çапма, транспорт бригади государствăна обязательство тăрăх тырă пама пуçлать.

Транспорт бригадине пултарулă комсомолец И. Никитин юлташ ертсе пырать. Вăл иртнĕ çул та транспорт бригадин бригадирĕ пулса ĕçленĕ. Тырпул пухса кĕртес ĕç вăхăтĕнче колхозра ачасен площадки пулать. Колхозри коммунистсемпе агитаторсем К. Федоров, Г. Рыков тата Н. Иванова юлташсем, колхозниксемпе пĕрле ĕçленĕ вăхăтрах, массăллă-ăнлантарулă ĕçе туса пымалла, колхозниксене хаçатсем вуласа памалла тата боевой листоксем кăлармалла. Малютин комсомолец колхозри стена хаçатне кăларса тăмалла. Çапла вара «Коммунист» колхоз тырпул пухса кĕртме пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитнĕ.

В. ГУСЬКОВ,
(Хамăр корр.).

„Çутталла" колхозра

Çавалкассинчи «Çутталла» колхоз вăрçăччен районра вăтам колхозсен шутĕнче тăнă. 1941 çултан пуçласа, хальтăшмана вĕçсĕма çак колхозран 105 çын фронта тухса кайнă. Колхоз Хĕрлĕ Çара 86 лаша панă. Вăл государство умĕнчи пур тĕрлĕ обязательствăсене те вăхăтра тултарса пынă. Унсăр пуçне, колхозниксемпе колхозницăсем паттăр воинсем валли ăшă тумтирсемпе япаласем, Хĕрлĕ Çар техникине вăйлатма нумай укçатенкĕ пухса панă.

Колхозниксемпе колхозницăсем Сталин юлташ Сĕнтерÿ пирĕнте пуласси çинчен каланă сăмаха çирĕп ĕненсе тăнă, вĕсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçленĕ. Алла ĕç тытма пултаракан пĕр çын та ахаль ларман. Çапла колхозниксем тăшмана çĕнтерме фронта ĕçлĕн пулăшса тăнă.

1943 çулта колхоз председателĕ пулса ĕçлеме Отечественнăй аслă вăрçă инвалидне А. Емельянов юлташа суйланă. Çак кĕске вăхăтрах колхоз палламалла мар улшăнчĕ, районра малта пыракан колхоз пулса тăчĕ. Вĕсем патне халĕ аякри колхозсенчен курма, вĕренме пыраççĕ.

«Çутталла» колхозăн хирĕнче ÿссе çитĕннĕ тулăх ыраша кĕрхи тулă паттваррăн хăпаракан çуртырпасем куçа илĕртеççĕ. Тырпул таса, унта пĕр çумкурăкĕ те курăнмасть. Тырпула колхозниксем лайăх пăхса çитĕнтереççĕ.

Çĕрулмипе тымар-çимĕçсем лартнă уйсем те кунта таса, вĕсене çумласа, купаласа тухнă.

Пуян тырпул пиççе çитет «Çутталла» колхозăн уйĕсенче. Унпа ял савăнать, колхозниксем савăнаççĕ.

Колхоз вăрçăчченхи 1940 çулта та колхозниксене кашни ĕçкунĕ пуçне 2,4 килограмм кăна тырă валеççе панă. 1941 çулта вара кашни ĕçкунĕ пуçне 3 килограмм таран тĕштырă, 1 килограмм чĕкĕнтĕр тата 1 тенкĕ те 50 пус укçан валеççе панă. Акакан çĕр лаптăкĕ те вăрçă вăхăтĕнчинчен чылай ÿснĕ. Кăçалхи ĕçкунĕсен хакĕ татах та ытларах пуласси курăнсах тăрать.

Вăрçă çулĕсенчех «Çутталла» колхоз электростанци турĕ. Ялта кашни колхозникĕн çуртĕнче Ильич лампăчки çутатать. Электростанци вырнаçнă çуртăн пĕр пайĕнче арман, вăл электричество вăйĕпе ĕçлет.

«Çутталла» колхоз электростанцие тума хĕлле кăна тытăннă. Чăваш республики 25 çул тултарнă тĕле ăна туса çитерсе ĕçе ячĕ.

Колхоз пулса çитĕнекен вăйлă тырпула пухса кĕртме хатĕрленсе çитрĕ. 4 бригада валли 3 жнейкăпа пĕр лобогрейка юсаса лартнă. 100 яхăн çурла шăллаттарса, 80 çава туптаттарса хунă. 120 кĕрепле хатĕрленĕ. Лашапа ĕçлемелли молотилкăна юсанă, 9 амбара çуса тасатса тырă хума хатĕрлесе çитернĕ. Кунсăр пуçне, 40 урапа, 4 бестарка, 120 михĕ, 15 шăналăк хатĕрлесе хунă.

Тырпул пухса кĕртме хатĕрленес тĕлĕшпе тата ытти мĕнпур ĕçсенче те С. Пономарев юлташăн 4-мĕш бригадипе Н. Бромкова юлташăн 3-мĕш бригади малта пыраççĕ.

Халĕ бригадăсенче тата пĕтĕм колхозра тырпулсене пухса кĕртмелли ĕç планĕсене туса хатĕрлеççĕ. Утă çулас ĕç хĕрÿллĕн пырать.

Çавăн пек пурăнаççĕ, ĕçлеççĕ Отечественнăй вăрçă инвалидĕ А. Емельянов юлташ ертсе пыракан «Çутталла» колхоз членĕсем. Ялхуçалăхне аталантарас тĕлĕшпе çитĕнÿсем тунăшăн хамăрăн республика юбилейĕ умĕн СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Емельянов юлташа Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăларĕ.

— Халĕ вăрçă пĕтрĕ. Мирлĕ аталану пуçланнă май хамăр колхоза эпир татах та ытларах тĕреклетессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлĕпĕр,—теççĕ кунти колхозниксем.

КАЛИНИНО. Е. ВОЛКОВ.

КОММЮНИКЕ

Союзниксен Германири Контроль Совечĕн 1945 çулхи июлĕн 30-мĕшĕнче Берлинра официальнăй пĕрремĕш ларăвĕ пулнă. Ларăва Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен представителĕ арми генералĕ Двайт Д. Эйзенхауэр ертсе пынă. Совет Союзĕн, Пĕрлешнĕ Королевствăн тата Франци республикин ку ларура тивĕçлĕ представителĕсем—Жуков Маршал, Монтгомери фельдмаршал тата Кениг генерал пулнă. Лару ĕçне заместительсем тата Совет членĕсен политика советникĕсем хутшăннă.

Ларура çапла йышăннă: Совет председателĕсем календарти кашни уйăхра, август уйăхĕнчен пуçласа, çĕршыв ячĕсен алфавитри çак йĕркипе улшăнса пымалла: Эйзенхауэр генерал, Монтгомери фельдмаршал, Кениг генерал, Жуков Маршал. Контроль Совечĕн ларăвĕсем кашни уйăхăн 10-мĕш, 20-мĕш, 30-мĕш кунĕсенче тата Советăн кирек хăш членĕ те пулин ыйтни тăрăх, кирек хăш вăхăтра та пулмалла.

Советăн тăватă членĕ хăйсен заместителĕсене Германие контроль туса тăракан органсене, Германие контроль туса тăракан аппарат çинчен тунă килĕшÿре палăртнăскерсене, организацилесе ĕçе ярасси çинчен панă сĕнĕве тĕпчесе вĕренме тата ун çинчен тепĕр ларура доклад туса пама хушнă.

Совет Мăн Берлинра Франци республикин çарĕсем оккупацилемелли сектор уйăрасси çинчен тунă килĕшĕве ырланă.

БЕРЛИН.
1945 çулхи июлĕн 30-мĕшĕ.

СОВЕТЛĂ СОЦИАЛИЗМЛĂ АВТОНОМИЛЛĔ НАХИЧЕВАНЬ РЕСПУБЛИКИ 25 ÇУЛ ТУЛТАРНИ

НАХИЧЕВАНЬ, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Советлă Социализмлă Автономиллĕ Нахичевань республикине тунăранпа 25 çул тултарчĕ.

Иртнĕ 25 çул хушшинче Нахичевань АССР-ĕ патша Российин кая юлнă кĕтесĕнчен малта пыракан республикăсенчен пĕри пулса тăчĕ. Совет влаçĕ пулнăранпа кунта темиçе вунă çĕнĕ заводпа фабрика туса лартнă. Ордубад хулинче консервăсем тăвакан пысăк завод, çуртйĕрсем лартмалли материалсем хатĕрлекеп тата кулленхи кирлĕ таварсем тăвакан предприятисем тунă. Нахичеваньри тăвар кăларакан рудниксенче халĕ тĕрлĕ механизмсемпе усă курса ĕçлеççĕ, çавăнпа та, революцичченхипе танлаштарсан, кунта тăвар çĕр хут ытларах кăлараççĕ.

Республикăри ялхуçалăхĕ те тĕпренех улшăннă. Пĕр вăрçă çулĕсем хушшинче кăна тĕштырăсем акакан çĕр лаптăкĕ 11 пин гектар хутшăннă. Майракаллă шултăра выльăхсемпе вак-тĕвек выльăхсен хисепĕ 160 процент ÿснĕ. Халĕ колхозниксем пиртĕ пысăк пĕвесем 5 пĕве туса пĕтереççĕ, çав шывпа 1600 гектар çинчи тырпула шăварма пулать.

Нахичевань республики культура тĕлĕшĕпе те чылай пысăк çитĕнÿсем тунă. Республикăра педагогика институчĕ уçнă, пуçламĕшпе вăтам шкулсем 200 шкул, темиçе медицина техникумĕ, ялхуçалăх техникумĕсемпе педагогика техникумĕсем пур, музыка шкулĕсем, икĕ театр, 15 кинотеатр ĕçлеççĕ. Хуласемпе республикăри ялсене лайăхлатас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем тунă. Пĕр иртнĕ çул кăна Нахичевань хулинчи урамсене 33.250 метр асфальт сарнă, 30.000 тĕп çимĕç кÿрекен йывăççемпе илемлĕ йывăççем лартнă. Республикăри колхозсенче çулталăк хушшинче 15 мунча, 12 клуб, 11 арман, 4 электростанци тунă.

Чирлĕ çынсене курорта ямалли йĕрке

РСФСР Наркомздравĕ чирлĕ çынсене курорта ямалли çĕнĕ йĕрке тунă.

Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене, вăрçăра аманнă пирки чирлекеннисене, укçа тÿлеттермесĕр сыватмашкăн Совет Союзне тата республикăсене пăхăнса тăракан курортсенче санаторисем уçнă. Çав санаторисене каймалли путевкăсене пурне те автономиллĕ республикăсен наркомздравĕсене, крайсенчи тата облаçсенчи сывлăх пайĕсене валеçсе параççĕ, çаксем вара çав путевкăсене вăрçă инвалидĕсем валли облаçсенчи поликлиникăсем çумĕнче организациленĕ медицина комиссийĕсем каланă тăрăх валеçеççĕ. Ĕçлекен инвалидсем путевкăсене гражданла халăхпа пĕрле илеççĕ.

Граждансене, вăл шутра ĕç инвалидĕсене тата ĕçлекен вăрçă инвалидĕсене, курорта яма кирлине санаторипе курорт комиссийĕсем çеç татса параççĕ. Çавăн пек комиссисем область хулисенче тата промышленность центрĕсенче пур çĕрте те пулмалла. Вăл комиссисенче чирлисене путевка паракан учреждениsемпе профорганизацисем ярсан çеç пăхса тухаççĕ. (ТАСС).

ЭСТОНИ ССР-ĕн ГОСУДАРСТВО ГИМНĔ

Эстони ССР Верховный Совет Президиумĕ Эстони ССР-ĕн Государство гимнне çирĕплетнĕ. Гимн сăмахĕсене И. Семпер поэт çырнă, музыки Г. Эрнесакс композиторăн. (ТАСС).

ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТЕССИ ТАТА ЯЛТИ МАССĂЛЛĂ-ПОЛИТИКĂЛЛĂ ĔÇĔН ЗАДАЧИСЕМ

А. ВИШНЯКОВ,
ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци енĕпе ĕçлекен секретарĕ

Колхозлă ял вăйлă тырпулпăн пыракан кĕрешÿн чи хĕрÿллĕ тапхăрне—тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес тапхăра пырса кĕрет. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленипе çапла кăтартса пачĕç: халĕ мĕнпур партипе совет тата хатĕрлев организацийĕсемпĕн, ялти коммунистсемпе комсомолецсемпĕн, колхозниксемпе колхозницăсемпĕн, МТС-семпе совхозсенчи работниксемпĕн тата ялхуçалăхĕнчи специалистсемпĕн тырпула пĕр тăккаламасăр, вăхăтра тата тĕплĕн пухса кĕме хатĕрленессинчен, çав ĕçсене лайăх туса ирттерессинчен тата кашни район, кашни колхозпа совхоз государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли хăйсен обязательствисене тултарассинчен пахарах задача урăх çук, çакă вăл хуçалăхпа политикăллă чи пысăк задача пулса тăрать. Çак задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртни вăрçă кÿрсе хăварнă суранасене хăвăртрах тÿрлетес тĕлĕшпе тата хамăрăн çĕршыври халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсене те кĕске вăхăтрах юсаса ура çине тăратас тĕлĕшпе питĕ паллă вырăн йышăнса тăрать.

Тырпул пухса кĕртме тытăнасси темиçе кун кăна юлчĕ. Анчах та пирĕн республикăри хăшпĕр районсенче тырпул пухса кĕме хатĕрленес тĕлĕшпе тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Хăшпĕр МТС-сем (Чкаловски, Сиява, Первомайски, Пăрачкав, Сурмайдан, Етĕрне тата ыттисем те) комбайнсем, тракторсем, тырпул пухса кĕртмелли ытти машинăсем юсас тата механизаци кадрĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе кая юлса пыраççĕ. Уйрăм районсенче тырпул пухмалли ансат машинăсемпе инвентарьсем хатĕрлес тĕлĕшпе, витнĕ итемсем, авăнсем тата сушилкăсем тăвас тĕлĕшпе тивĕçлипе тăрăшмаççĕ. Заготзерно пунктсенчи складсене юсаса йĕркелесси те, инçетри вырăнсенчи пунктсене юсаса хатĕрлесси те, çавăн пекех тата колхозсенчи складсене юсасси те кая юлса пырать. Чылай вырăнсенче туртăм вăйĕпе транспорт инвентарĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе тивĕçлипе тăрăшмаççĕ.

Тырпул пухса кĕртме тытăниччен çак çитменлĕхсене пурне те пĕтермелле. Колхозсемпе МТС-сем тырпул пухса кĕме тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлеме мĕн тери тĕплĕн хатĕрленнине государство комиссийĕсен халех тĕплĕн тĕрĕслесе тухса йышăнмалла, тĕрĕслени итогĕсене колхозниксен тата МТС работникĕсен пĕрлехи пухăвĕсенче сÿтсе-явса, палăртнă çитменлĕхсене вăхăтра тÿрлетмелле. Тырпул пухса кĕме хатĕрленес ĕçре нимĕнле «вак-тĕвек» ĕçсем те çук. Тырпул пухса кĕртме тата авăн çапма тытăннă малтанхи кунсенчех пысăк тухăçлăхпа ĕçлемелле тăвас тесен, пур ĕçе те малтанах шутласа хумалла.

Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра ялта политикăллă ĕç туса пырас тĕлĕшпе парти райкомĕсем умĕнче, мĕнпур парти тата комсомол организацийĕсем умĕнче халĕ питĕ пысăк задачăсем тăраççĕ. Тырпула ăнăçлăн пухса кĕртесси комбайнерсемпе трактористсенчен тата колхозниксенчен килет. Çавăнпа та массăсем хушшинче политикăллă ĕçе мĕн чухлĕ анлăрах сарса янă, тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлес ĕç те çавăн чухлĕ ăнăçлăрах пулса пырĕ. Пропагандистсемпе агитаторсен, ялти коммунистсемпе комсомолецсен колхозниксене кăçалхи тырпула ăнăçлă пухса кĕртни халăх хуçалăхĕнче расна пысăк вырăн йышăнса тăнине ăнлантарса памалла. Колхоз хресченĕсене тата ытларах вăй хурса ĕçлеме хавхалантарса, çапла вара тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе пур ĕçсене те вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттермелле тăвас пулать.

Иртнĕ кунсенче ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ тырпул пухса кĕртнĕ тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрленĕ вăхăтра ялта массăллă-политикăллă ĕç туса пырасси çинчен решени йышăнчĕ. Ялти массăллă-политикăллă мĕнпур ĕçĕн никĕсĕнче СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановлени пулмалла. Партипе правительство тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен йышăннă постановлени парти, совет, çĕрĕç органĕсемпĕн тата ялхуçалăхĕнчи мĕнпур работниксемпĕн ĕçĕн боевой программи пулса тăрать. Çак паха документа кашни колхозника, тракториста, комбайнера т. ыт. работниксене те ăнлантарса памалла.

Парти райкомĕсен тырпул пухса кĕртнĕ тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрленĕ вăхăтра туса пымалли массăллă-политикăллă ĕçĕн планĕсене тĕплĕн шухăшласа тăвас пулать. Çав плансенче, халăх хушшинчи массăллă ĕçĕн опытне шута илсе, тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте ĕçлекен колхозниксене тата ялхуçалăхĕнчи мĕнпур работниксене пулăшу парас тĕлĕшпе пур мероприятисене те палăртса хăвармалла. Ялти агитколлективсене вăйлатса çирĕплетмелле, колхозсемпе МТС-сенчи агитколлектив руководителĕсене уйăрса çирĕплетмелле. Агитаципе массăллă ĕçе районри парти, совет тата комсомол организацийĕсен ертсе пыракан работникĕсене, ялти коммунистсемпе комсомолецсене, учительсене, ялхуçалăх специалисчĕсене, колхоз производствин малта пыракан çыннисене явăçтармалла. Колхозниксем хушшинчи массăллă ĕçе Хĕрлĕ Çартан таврăннă юлташсене хăюлăнрах хутшăнтармалла.

Агитатор вăл—колхозпа МТС-ра пысăк çын. Парти организацийĕсен агитаторсене яланах тырпул пухса кĕртес ĕçри чи ответлă вырăнсене: комбайн патне, уйхир ĕç бригадине, капан хывнă çĕре, молотилка патне, трактор бригадине уйăрса лартмалла.

Агитацилле-массăллă ĕçре ленинла примерăн вăйĕ уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ун çинчен пирĕн республикăри ялти агитаторсен практикинчи çав тери нумай фактсем те каласа параççĕ. Агитаторсен уйра ытти колхозниксемпе пĕртанах ĕçлемелле, вĕсен дисциплинăллă пулмалла, организацилĕхпе ĕçченлĕхе кăтартмалла, массăллă ĕçе пуринчен ытларах ĕçлемен вăхăтра туса пымалла. Сакă ĕнтĕ вĕсен ĕçĕ ăнăçлă пулассин питĕ паха условийĕ пулса тăрать. Агитаторсем уйра мĕн чухлĕ лайăхрах ĕçлĕç, вĕсем çынсене чĕнсе калани те çавăн чухлех усăллăрах пулĕ.

Агитаторăн пур ĕçре те пуçаруллă, тавçăруллă пулмалла. Сăмахран, ялхуçалăх ĕçĕнче майракаллă шултăра выльăхпа усă курас ыйтăвах илер. Агитаторсем колхозниксене тырпул пухса кĕртес тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем леçсе парас ĕçре колхозниксен, рабочисемпе служащисен майракаллă шултăра выльăхĕпе тата тухăççăр ĕнисемпе усă курни мĕн тери пысăк усă панине ăнлантарса памалла. Хăйсен ĕнисене кÿлсе ĕçлекен колхозниксене, рабочисемпе служащисене ĕçшĕн мĕнле тÿлемелли йĕркене каласа памалла. Анчах ку çителĕксĕр-ха. Ялти коммунистсемпе комсомолецсен, агитаторсен ялхуçалăх ĕçĕсене тумашкăн чи малтанах хăйсен ĕнисене кÿлсе тухса пример кăтартмалла.

Тырпул пухса кĕртес ĕçе ăнăçлă туса ирттерес тĕлĕшпе колхозри ĕçе тĕрĕс организацилени, колхозниксен тата тырпула пухса кĕртес ĕçе хутшăнтарнă ялхуçалăхĕнчи ытти работниксен çирĕп дисциплина пулни татăклă вырăн йышăнса тăрать. Тырпул пухса кĕртмелли хĕрÿ ĕç вăхăтĕнче колхозри 14 çултан иртнĕ пур çынсене те, вĕсем ĕçкунĕсен минимумне тунипе туманнине пăхмасăрах, уйри ĕçе хутшăнтармалла. Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра кашни колхозрах ача площадкисемпе яслисем организацилесе, ачаллă колхозницăсене ĕçе хутшăнтармалли условисем туса памалла.

Пропагандистсемпе агитаторсен колхозниксене ĕçе звеносем тăрăх организацилении усăллăхне ăнлантарса памалла, колхоз правленийĕсене уйра тата итем çинче çынсене тĕрĕс лартса тухма пулăшмалла. Колхозсенче уйрăм сдельщинăпа тата пĕчĕк ушкăнсен (звеносен) сдельщинипе анлăн усă курмалла, çак мел ĕнтĕ ĕç тухăçлăхне ÿстермелли пысăк вăй пулса тăрать. Сураки вăхăтĕнче Элĕк, Советски, Хĕрлĕ Чутай тата хăшпĕр ытти районсенчи чылай колхозсенче ĕçе звеносем тăрăх организацилессине пăрахăça кăларнăччĕ. Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра кун пек йăнăшсем пулассинчен сыхланмалла.

Агитаципе пропаганда работникĕсен колхозниксене партипе правительство обязательнăй йĕркепе ĕçкунĕсен минимумне тăвасси çинчен йышăннă постановление, тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте ĕçшĕн тÿлемелли йĕркене, малта пыракан колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕркене тăтăшах ăнлантарса парса, çак решенисене кашни колхозрах пĕр сăмахсăр пурнăçа кĕртсе пымалла тăвас пулать. Колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке ĕç тухăçлăхне ÿстермелли тата ĕç дисциплинине çирĕплетмелли хăватлă вăй пулса тăнине ăнлантарса памалла. Анчах та Улатăр, Пăрачкав, Первомайски районсенчи уйрăм колхозсенче партипе правительствăн çак постановленийĕсене пурнăça кĕртсе пымаççĕ. Çакăн пек çитменлĕхсене халех пĕтермелле.

Социализмлă ăмăрту—пирĕн тĕрĕсленнĕ ĕç меслечĕ. Ялти коммунистсемпе комсомолецсем тата вырăнти агитаципе пропаганда ĕçĕн работникĕсем тырпул пухса кĕртессипе государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парассине вăхăтра та пысăк пахалăхлăн туса ирттерессишĕн социализмлă ăмăртăва пуçарса, хавхалантарса пыма тивĕçлĕ. Нумаях пулмасть республикăри хаçатсенче Вăрнар районĕнчи колхоз председателĕсем, МТС-па хатĕрлев организацийĕсен работникĕсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе хатĕрлев организацийĕсен работникĕсене тата ялхуçалăх специалисчĕсене чĕнсе калани пичетленсе тухрĕ. Республикăра малта пыракан Вăрнар районĕнчи колхозниксем тырпула ăнăçлăн пухса кĕртессишĕн, государствăна тырă срокчен парса татассишĕн, кĕрхи тырăсене пахалăхлăн акса хăварассишĕн, хăйсем Чăваш республики 25 çул тултарнă уяв кунĕсенче илнĕ обязательствăсене тултарни çинчен Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама право илессишĕн аслă Çĕнтерÿ ячĕпе социализмлă ăмăрту пуçарса ячĕç. ВКП(б) райкомĕсен, ялти коммунистсемпе комсомолецсен тата агитаторсен вăрнарсем чĕнсе каланине мĕнпур колхозсемпе МТС-сенче сÿтсе-явассине организацилемелле, кашни колхозпа машинно-тракторнăй станцие социализмлă ăмăртăва хутшăнтармалла. Халĕ кашни колхозпа МТС, татăклă обязательствăсем илсе, вĕсене тултарса пыма тивĕçлĕ. Колхозлă ялти социализмлă ăмăртăва пирĕн пĕтĕм халăх ăмăртăвĕ туса хумалла.

Социализмлă ăмăрту чăннипех массăллă та ĕçлĕ ăмăрту пултăр тесен, вăл мĕнле пынине анлăн кăтартса тăмалла. Уйрăм колхозниксемпе трактористсен, бригадăсен паха тĕслĕхĕсене пĕтĕм халăха пĕлтерсе тăмалла. Кашни колхозник, тракторист, комбайнер ăмăрту мĕнле пынине куллен сăнаса тăтăр, вăл хăй ĕçĕн тĕслĕхĕсене кăна мар, хăй юлташĕсен тата пĕтĕм бригадăн ĕçри тĕслĕхĕсене те, çавăн пекех хăйĕн бригади колхозри ăмăртура мĕнле вырăн йышăнса тăнине те пĕлсе тăтăр, ĕçре хавхаланса, хĕрÿлленсе пытăр.

Агитатор ăмăрту результачĕсене куллен шута илсе пыма тивĕçлĕ. Кашни колхозра, бригадăра, МТС-ра ăмăрту мĕнле пынине кăтартмалли хăма тата Хисеп хăми тумалла. Ăмăрту тĕслĕхĕсене куллен шута илсе сÿтсе-явни—ытахалтен туса пымалли ĕç мар, вăл ĕç тухăçлăхне ÿстермелли паха май пулса тăрать.

Парти райкомĕсен МТС-ри трактористсемпе комбайнерсем тата ытти работниксем хушшинчи политикăллă ĕçе организацилесси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Кашни бригада çумне агитатор тата боевой листок редакторне уйăрса çирĕплетмелле. Трактористсемпе комбайнерсене, МТС-ри ытти мĕнпур работниксене пĕтĕм тĕнчери лару-тăру çинчен, çĕршыври пурнăç çинчен тăтăшах ăнлантарса памалла. Тырпула ăнăçлăн пухса кĕртессишĕн МТС работникĕсен социализмлă ăмăртăвне организацилемелле, тырпул пухса кĕртес ĕçре ăмăрту ялавне çĕкленĕ Саратов трактористчĕсемпе комбайнерĕсен пуçарăвне анлăн сармалла.

Тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçре ялти çамрăксем пысăк вырăн йышăнса тăма тивĕçлĕ. Тырпул пухса кĕртессипе ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси пĕтĕм халăхăн паха ĕçĕ пулса тăни çинчен çамрăксене тĕплĕн ăнлантарса памалла. Тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте стахановла ĕçлессишĕн комсомолецсемпе колхоз çамрăкĕсем хушшинче социализмлă ăмăрту сармалла, çамрăксен колхозсенчи вăйлă тырпул звенисене тата МТС-сенчи çамрăксен бригадисене куллен пулăшса пымалла.

Массăллă-политикăллă ĕçĕн пур майĕсемпе те (хаçат вуласси, политика, çутçанталăкпа наука тата агротехника темисем тăрăх каласусемпе лекцисем ирттересси, производствăллă канашлусем ирттересси, ĕçе усçăн кăтартса паракан агитацие туса пырасси, кăтарту хăмисем тăвасси, художество пултарулăх ĕçне организацилесси тата ытти те),—çаксемпе пуринпе те халĕ пĕр паха задачăна пурнăça кĕртнĕ çĕрте — колхозлă ялăн мĕнпур вăйĕсене тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçсене вăхăтра та пахалăхлăн туса ирттерме мобилизациленĕ çĕрте усă курмалла.

Халăх хушшинчи политикăллă ĕçĕн чи анлăн сарăлнă формисенчен пĕри—хаçат вуласси пулса тăрать. Анчах пирĕн хăшпĕр пропаганда работникĕсемпе агитаторсем çав ĕçе питĕ çиелтен ăнланаççĕ. Чылай чухне агитатор колхозниксене алла мĕн лекнĕ çавна вуласа парать. Агитаторăн материала суйласа илме пĕлмелле, вăл вуласа паракан материал итлекенсене интереслентертĕр, вуласа тухнă хыççăн вĕсем хăйсен шухăшĕсене каласа паччăр. Калинин юлташ пропагандăпа агитаци пирки çапла каланă:

«Хаçата сÿтсе-явмасăр вулани — çителĕксĕр. Кунта çавăн пек те пулма пултарать: пĕри хаçата малтанах вуласа тухнă та вăл сире итлемест, тепри вара, вуласа тухман пулин те, ăна пĕр вулани кăна нимĕнех те памасть, тесе шутлать. Эсир мĕн вуланине пĕтĕçтерсе анализ туса пама тăрăшсан, паллах, хаçат вулани кашнишĕн интереслĕ пулать».

Пропагандистсемпе агитколлектив руководителĕсен агитаторсене тата каласу ирттерекенсене хаçатри материалсем тăрăх каласу темисене палăртма, вулав ĕçне йĕркелесе пыма, кирлĕ литература тупма пулăшмалла. Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра хаçат-журналсене тÿрех çынсем ĕçленĕ çĕре—уйхире, итем çине илсе пыни паха.

Партин хула комитечĕсем партин ялти райкомĕсене колхозсемпе МТС-сенче массăллă-политикăллă ĕçе организацилеме пулăшмашкăн тивĕçлĕ. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, партин хуласенчи (Шупашкар, Канаш, Улатăр, Çĕмĕрле тата ытти çĕрти) организацийĕсен хулари партипе совет тата комсомол активĕнчен колхозсене 200 çын ямалла. Парти хула комитечĕсен секретарĕсем колхозсене каякан юлташсене хăйсем инструкцисем пама тивĕçлĕ. Хуласенчи художествăллă пултарулăх коллективĕсем колхозсене тăтăшах тухса çÿремелле.

Пирĕн хаçатсемпе радио умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Парти райкомĕсен районсенчи хаçатсемпе вырăнти радиовещанин ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла, хаçатсене тырпул пухса кĕртессипе ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлессине ăнăçлăн туса ирттерме мĕнпур колхозниксене мобилизацилемелли тата политикăллă воспитани памалли чăн-чăн боевой органсем туса хумалла. Райхаçатсемпе вырăнти радиовещани редакцийĕсен тырпул пухса кĕртес ĕç вăхăчĕ валли плансем туса вĕсене парти райкомĕсенче çирĕплетмелле.

Колхозсемпе МТС-сенче стена хаçачĕсемпе боевой листоксем йĕркеллĕ кăларса тăрас пулать. Стена хаçачĕсемпе боевой листоксенче тырă вырса пухас ĕç мĕнле пынине, стахановецсен ĕç опытне анлăн çутатса тăмалла, кахалсемпе япăх ĕçлекенсене тăрă шыв çине кăлармалла, колхозниксене тырпула вăхăтра пухса кĕртессишĕн тата государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татассишĕн кĕрешме организацилемелле. Районри хаçатсемпе стена хаçачĕсенче тырпула сыхлас ыйту тĕп вырăн йышăнма тивĕçлĕ.

Колхозниксем халĕ хаçат-журналсем нумай ыйтаççĕ. Райкомсенчи пропаганда отделĕсем колхозниксемпе МТС работникĕсен ыйтăвне май килнĕ таран туллин тивĕçтерсе пымалла. Район илекен мĕнпур хаçатсен 70—80 процентне ялсене ярса тăрас пулать. Хаçатсене вуланă хыççăн хуласемпе район центрĕсенчен колхозсене, трактор бригадисене ярассине организацилеме тăрăшмалла. Кашни колхозрах хаçат витринисем тумалла.

Колхозниксем хушшинче ĕçлес тĕлĕшпе ялти политпросвет учрежденийĕсем—вулав çурчĕсемпе колхоз клубĕсем, библиотекăсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Анчах чылай районсенчи политпросвет учрежденийĕсем халĕ те çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Парти райкомĕсен, пропагандăпа агитаци отделĕсен тата райсовет исполкомĕсен вулав çурчĕсемпе клубсен тата библиотекăсен ĕçĕ çине тимлĕнрех çавăрăнса пăхма тивĕçлĕ. Эпир вулав çурчĕсемпе клубсене ялти культурăллă-массăллă ĕçĕн чăн-чăн центрĕсем туса хума пултаратпăр, туса хумалла та. Тырă вырса, пухнă вăхăтра вулав çурчĕсемпе клубсен мĕнпур ĕçне уйхире, итем çине куçармалла. Колхозниксем каннă вăхăта чăннипех культурăллă организацилес тесе, художествăллă пултарулăх коллективĕсен выступленийĕсене организацилемелле. Çураки вăхăтĕнчи пекех, районри библиотекăсенчен колхозсене илемлĕ тата массăллă литературăсем ярса тăмалла.

Ялти халăха кино кăтартас ĕçе те кирлĕ пек йĕркелес пулать. Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи кинофикаци управленийĕн, парти райкомĕсен, уйрăмах пропагандăпа агитаци отделĕсен кашни районра кинопередвижкăсен ĕçне тĕпренех лайăхлатмалла. Кинопередвижкăсен маршручĕсене ВКП(б) райкомĕсенче çирĕплетмелле, вĕсене çирĕп пурнăça кĕртсе пымалла. Киномеханиксемпе пĕрле ВКП(б) райкомĕн докладчикĕ е пропагандист колхозниксем валли кино умĕн докладсемпе каласусем ирттерме колхозсене тухса çÿресен питĕ аван пулнă пулĕччĕ.

* * *

Нумаях пулмасть Чăваш республикинчи ĕçсыннисем хамăрăн республика 25 çул тултарнине палăртрĕç. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ пирĕн республика 25 çул тултарнă кун ячĕпе панă хăйсен саламĕнче Чăваш республикинчи рабочисемпе колхозниксен тата интеллигенцин ĕçне пысăка хурса хакларĕç, хамăр Совет çĕршывĕн хăватне тĕреклетессишĕн республикăри ĕçсыннисем малашне те пĕтĕм вăя хурса ĕçлессине шанса тăни çинчен каларĕç. Пирĕн ĕçе çавăн пек пысăка хурса хаклани ĕçсыннисен патриотла шухăш-кăмăлне çав тери хавхалантарса çĕклерĕ.

Республика 25 çул тултарнă чаплă уяв кунĕнче Чăваш республикинчи ĕçсыннисем хамăрăн çулпуçăмăра тата учителĕмĕре Сталин юлташа çапла тупа туса каларĕç: хамăрăн юратнă çĕршыва вăрçă кÿнĕ сурансене хăвăртрах тÿрлетсе çитерес тесе, унăн вăй-хăватне татах та ытларах тĕреклетес тесе, эпир мирлĕ кунсенче те, вăрçă вăхăтĕнчи пекех, ытларах та ытларах вăй хурса ĕçлĕпĕр! Пирĕн ĕçсыннисем колхозсемпе совхозсен уйхирĕсенче тырпул тухăçлăхне ÿстерессишĕн, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатса пырассишĕн, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерессишĕн, хамăрăн промышленноçпа культурăна малалла аталантарса пырассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме тупа турĕç.

Тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçе вăхăтра та пысăк пахалăхлăн туса ирттерни хамăрăн орденлă республикăна чечеклентерессишĕн партипе правительство тата пирĕн çулпуçăмăрпа учителĕмĕр Сталин юлташ çав тери тимлĕн тăрăшни çине республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, трактористсемпе комбайнерсем тата мĕнпур ялхуçалăх работникĕсем панă чи лайăх ответ пулĕ.

Тырпул пухса кĕртессипе ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕç агитаципе пропаганда работникĕсем умне пысăк та ответлă задачăсем лартать. Иккеленмелли çук: парти организацийĕсем ертсе пынипе, ялти массăллă-политикăллă ĕçĕн пуян опычĕпе усă курса, пирĕн пропаганда работникĕсем çав ответлă та хисеплĕ задачăсене чыслăн пурнăçа кĕртĕç.

Совет гражданĕсене Норвегирен илсе килесси пирки

ОСЛО, июлĕн 25-мĕшĕ. ТАСС). Совет гражданĕсене Норвегирен тăван çĕршыва илсе килес ĕçе малтанлăха пĕтĕçтернĕ май, репатриаци комиссийĕн руководителĕ Ратов генерал-майор, хальхи вăхăтра Осло хулинче пурăнаканскер, ТАСС корреспондентне çапла каласа панă:

«Июлĕн 25-мĕшĕ тĕлне Норвегирен тăван çĕршыва 82.972 совет гражданинĕ таврăннă. Нимĕçсем выçă усраса тата хĕнесе вилес патне çитернĕ 1.097 чирлĕ çын кăна юлнă. Кунсăр пуçне, Норвегире Хĕвеланăç Украинăран, Хĕвеланăç Белоруссирен тата Балтика тăрăхĕнчи советлă республикăсенчен илсе килнĕ совет гражданинĕсем 5.000 çын шутланаççĕ. Анчах çав çынсем хăш çĕршыв гражданинĕ пулса тăнине союзниксен командованийĕ тем майпа вара «тавлăшуллă ыйту» тесе шутлать, çавна пула вĕсене Совет Союзне ăсатма васкамасть. Совет Союзĕн репатриаци тĕлĕшпе ĕçлекен комиссийĕ ку таранча çитсе те çав совет гражданĕсем çинчен кирлĕ сведенисем илме пултараймасть. Тăван çĕршыва таврăнасшăн пулин те, вăл çынсене уйрăм лагерьсенче усраççĕ. Çав лагерьсене Совет Союзĕн представителĕсене кĕме ирĕк памаççĕ. Çав вăхăтрах ытти çынсем, сăмахран, поляксен Лондонри «представителĕсем» çав лагерьсене ирĕккĕнех кĕрсе çÿреме пултараççĕ. Çакă та тĕлĕнтерет: «тавлашуллă» текен çав граждансенчен нумайĕшне нимĕçсене усракан лагерьсенчех тытса усраççĕ. Совет гражданĕсене латинла Америкăна е Англие ярасшăн агитациллеççĕ.

Çапла вара Норвегире, чирлисене шутласан, тата 6.000 ытла совет гражданинĕ пурăнать. Тăван çĕршыва таврăнакан çынсем пурте Совет Правительствине тата Сталин юлташа хăйсемшĕн тăрăшнăшăн тав тăваççĕ. Çавăн пекех вĕсем Норвегире нимĕçсем пуç пулса тăнă вăхăтра хăйсене пулăшнă Норвеги çыннисем çинчен те ăшшăн асăнаççĕ. Манăн алăра тăван çĕршыва таврăннă совет гражданĕсем ушкăнпа çырнă çырусем пур. Çав çырусенче вĕсем норвежецсене, нимĕç пусмăрĕнче пулнă совет гражданĕсемшĕн тăрăшса вĕсене пулăшнăскерсене, вырăсла спасибо калама хушаççĕ».

США СЕНАЧĔ ПĔРЛЕШНĔ НАЦИСЕН УСТАВНЕ ЙЫШĂНСА ÇИРĔПЛЕТНĔ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркри радио çапла пĕлтерет: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен сеначĕ июлĕн 28-мĕшĕнче пĕрлешнĕ нацисен уставне йышăнса çирĕплетнĕ. Пĕрлешнĕ нацисен уставне йышăнса çирĕплетессишĕн 89 сенатор сасăланă, 2 сенатор устава хирĕç сасăланă.

ФИНЛЯНДИРЕ ВĂРÇĂ ПРЕСТУПНИКĔСЕНЕ СУД УМНЕ ТĂРАТМА ЫЙТНИ

ХЕЛЬСИНКИ, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Хельсинки хулинчи «Эсперия» ятлă паркра июлĕн 25-мĕшĕнче пысăк митинг пулса иртнĕ. Ку митинга Финлянди халăхĕн демократиллĕ союзĕ, «Финляндипе Совет Союзĕ» ятлă общество тата социал-демократсен хăшпĕр обществăллă организацийĕсем пухнă. Митинг вăрçă преступникĕсене ответ тыттарас тĕлĕшпе пулнă. Митингра сейм депутачĕ Херта Куусинен тата юстици наукисен докторĕ Хиитонен сăмахсем тухса каланă. Вĕсемсĕр пуçне митинга пухăннă халăхран тата 10 çын тухса каланă.

Митинг резолюци йышăннă. Резолюци вăрçă преступникĕсене халех суд умне тăратма ыйтать. Унта çапла каланă: «Митинга пухăннă халăх правительствăран чи сахалтан та 5 çынна, вăрçă пирки айăплă тесе сеймра асăннăскерсене, ответ тыттарма халех суд умне тăратмашкăн ыйтать. Çав айăплă çынсем çаксем: президент пулнă Рюти, премьер-министрсем пулнă Рангельпе Линкомиес, министр пулнă Таннер тата Финляндин Берлинри посланникĕ пулнă Кивимяки.

Çав çынсем Финлянди, вăрçа хутшăнса, гитлерла Германипе пĕр пулса, Пĕрлешнĕ нацисене хирĕç çапăçнăшăн пĕтĕмĕшпех ответлă. Митинга пухăннă халăх вăрçă преступникĕсем тĕлĕшпе тăракан ыйтăва татса памасăр малалла тăсса пынине текех чăтма çук тесе шутлать, мĕншĕн тесен çав ыйтăва малалла тăсса пыни халăха хăй правительствине шанми туса хурать, Финлянди халăхне ют çĕршывсенче ырă енчен кăтартмасть».

Митинга пухăннă халăх хăйсен хушшинчен делегаци суйланă. Малта асăннă резолюцие çав делегаци правительствăна панă.

АНГЛИ ПАРЛАМЕНЧĔ АВГУСТĂН 15-МĔШĔНЧЕ УÇĂЛАТЬ

ЛОНДОН, июлĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англин çĕнĕ парламентне уçас вăхăта августăн 8-мĕшĕнчен 15-мĕш числине куçарнă.

ЭТТЛИ ВЫРĂННЕ МОРРИСОН ЮЛНĂ

ЛОНДОН, июлĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпар тăрăх, премьер-министрăн резинденцийĕ июлĕн 28-мĕшĕнче касхине çапла пĕлтернĕ: Эттли «Аслă Тройка» конференцийĕнче пулнă вăхăтра правительство ĕçĕсене советăн лорд-председателĕ Герберт Моррисон ертсе пырать.

ПЕТЭНА СУД ТУНИ

ПАРИЖ, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Петэн сучĕн 6-мĕш кунĕнче свидетельсем пулса çаксем каласа кăтартнă: Жорж Клемансо, генерал Дуайен, Францин Мадрид хулинчи посольствин сотрудникĕ пулнă Ла Марль тата ыттисем те.

Клемансо çапла каланă: Германие парăнассине хирĕç тăнă Жорж Мандель министра тĕттĕм те йĕпе камерăна пĕччен хупса усрарĕç. 1942 çул вĕçĕнче Виши «правительстви» ăна нимĕçсен аллине пачĕ.

Дуайен каласа панинчен çакă курăнса тăрать: Петэн Лавале хăйĕн усал политикине туса пыма яланах пулăшса тăнă. Çав политика вăл—нимĕçсем Франциçрен мĕн ыйтнине пурне те туса пырасси пулнă.

ПАРИЖРА ВĂРТТĂН ĔÇЛЕКЕН ОРГАНИЗАЦИ ТУПНĂ

ПАРИЖ, июлĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Июлĕн 26-мĕшĕнче пур хаçатсенче те юлашки кунсенче Парижра вăрттăн ĕçлекен организаци тупни çинчен пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Çав организацин взрыв тумалли япаласемпе хĕçпăшалсен пит пысăк склачĕсем пулнă. Полици пĕлтернĕ тăрăх, çав организаци юлашки уйăхсенче тупса палăртнă организацисенчен чи пысăкки шутланать. Унăн укçа-тенкĕ пит нумай пулнă. Малтанлăха тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, вăл укçа-тенкĕ Испанирен пырса тăнă. Хĕçпăшал складне йĕрлесе тупнă май вăрттăн ĕçлекен организаци пуррине палăртнă. Çав бандăн 12 участникне арестленĕ, унăн пуçĕнче Мария Луиза Д. Певилль ятлă хĕрарăм тăнă. Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, çав бандăн участникĕсем пурте пытанса ĕçлес шутпа МЛН организаци («Халăх ирĕклĕх юхăмĕн») членĕсем шутланнă. Организацин руководителĕ Д. Невилль МЛН-ра пысăк ĕçре пулнă, вăл МЛН отделĕсенчен пĕрине ертсе пынă. Малтанлăха тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, организаци тĕрлĕрен диверсиллĕ ĕçсем тăвас, çавăн пекех «коммунистсене хирĕçле» ĕçсем тăвас задача лартнă пулнă.

ГРЕЦИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРĂНТАН ТУХНĂ

ЛОНДОН, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет. Греци премьер-министрĕ Вулгарис тата ун кабинечĕн членĕсем пурте вырăнтан тухнă.

США, АНГЛИ ТАТА КИТАЙ ЯПОНИЕ АСĂРХАТТАРНĂ ПИРКИ ЯПОНИ АГЕНТСТВИ КАЛАНИ

ТОКИО, июлĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Домей цусин агентстви çапла пĕлтерет: авторитетлă вырăнсенче пĕлнĕ тăрăх, çакă паллă пулса тăнă: Черчилль, Трумэн тата Чан Кай-ши виççĕшĕ пĕрле японецсене асăрхаттарнине хирĕç Япони нимĕнле ответ та пама шутламасть. Çав виçĕ çĕршыв руководителĕсем японецсене пĕр сăмахсăр парăнма чĕннĕ. Агентство пĕлтернĕ тăрăх, Япони, хăй пĕрре йышăннă политикăна пурнăça кĕртсе пырса, мĕн пĕтиччен вăрçма пăрахас çук.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, июлĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпарсем тăрăх, союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешÿллĕ командованийĕ июлĕн 29-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Америка авиацийĕ Японин Цусима проливĕнче тăракан тата Японин шалти тинĕсĕнче тăракан суднисене атакăланă. Пĕтĕмĕшпе 16.000 тонна таякан 6 грузовой суднăпа пĕр транспорта шыва путарнă, çавăн пекех тата икĕ каботажнăй суднăпа пĕр миннăй тральщике путарнă. Америка авиацийĕ çавăн пекех тата Хонсю утравĕнчи Нагоя хулинчи аэродрома тата Японин Амами утравĕнчи объекчĕсене те атакăланă. Американецсен хурал та çÿрекен бомбардировщикĕсем Корейăри Фузань хулинчи доксене тапăннă.

Бронео утравĕ çинче Америка авиацийĕпе флочĕ Япони çарĕсене пĕтерсе пынă.

ВАШИНГТОН, июлĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Америка авиацийĕ июлĕн 29-мĕшĕнче тăшмана тапăннă чухне Японин «Харуна», «Иое» ятлă линкорĕсене тата «Аоба», «Ойода» ятлă крейсерĕсене вут тивертсе янă.

Малалла пĕлтерÿре çапла каланă: июлĕн 24-мĕшĕнче çав районта тапăннă чухне сиенленĕ «Хьюга» ятлă Япони линкорĕ шыва путнă. Июлĕн 28-мĕшĕнче тапăннă чухне те японецсен виçĕ подводнăй лодкине шыва путарнă тата ытти 12 карапа сиенленĕ.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 1-67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕ 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00381 Типография №1, Управления по ... промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. б. 59 42 п. п. Тираж 16.000